

# ТИМУШ, УН АМĂШĔ,

## Калав

Хветĕр УЯР

*В. АГАКОВ ӳкерчĕкĕсем.*

Тимуша паян ир те туртса карăнтарнă туйăм çĕклерĕ вырăн çинчен. Вăранасса вăл алăк хупнă сасăпа вăранчĕ: амăшĕ магазина тухрĕ ĕнтĕ. Паян шкула каймалла мар тесе, Тимушăн кăштах кахалланса выртма та пулатчĕ, вăл **пурне те** аса илчĕ те вырăн çинчен яшт çеç сиксе тăчĕ. Кĕçех ак ун амăшĕ таврăнать те, вĕсем ирхи апат çиеççĕ. Вара амăшĕ кĕпе çума тытăнать, Тимуша «сывлăхне çирĕплетме» урама хăваласа кăларать. Пĕрер сехете. Унтан Тимушăн кĕнеке вуламаллла. Уроксем тумалла.

Кăнтăрлахи апат хыççăн татах уçăлса çӳремелле. Киле таврăнса, каллех урока хатĕрленмелле...

Кунĕпех çапла — амăш нăхтиинче.

Ку вăл вырсарникунхи йĕрке. Ытти чухне Тимуш çур кун шкулта ирттерет. Амăшĕ заводра ĕçлет.

Вăл—рабочи класс.

Тимуш тăчĕ те вырăнне пуçтарса хучĕ. Куна вăл тахçанах хăнăхнă. Пĕчĕккĕ чухнех. Халь вăл вунна пуснă ĕнтĕ.

Тата мĕн тумалла-ха? Çăвăнмалла, тумланмалла. Унтан хваттере тирпейлемелле, урай сĕрсе тухмалла. Часрах, часрах, атту амăшĕ таврăниччен ĕлкĕреймест вăл.

Тепĕр тессп ма ун пекех çапăнса-хыпăнса çӳрес? Пурпĕрех амăшĕ халех килмест-ха. Вырсарникун вăл апат-çимĕç пĕр эрне пурăнмалăх илсе хурать.

Вĕсем амăшпе иккĕшех пурăнаççĕ. Ашшĕ таçта «ирĕкре» çӳрет. Çине-çинех вăл çыру ярса тăрать. Анчах Тимуш амăшĕ вĕсене вуламасть, илнĕ-илмен е çурса тăкать е çӳп-çап витрине пăрахать.

Çут тĕнчери пур амăшĕсем пекех, Тимуш амăшĕ те ывăлне хăй пĕлнĕ пек пăхса çитĕнтересшĕн, хăй калăпĕпе калăплассшăн.

Хăйĕн ăнман ун пурнăçĕ. Ашшĕне пĕлмест вăл. Сăнĕ те пулин çук унăн. Амăшĕ вăрçă вăхăтĕнче трактор айне пулса виллнĕ. Суха кассине выртса çывăрнă та вăл вăранайман та. Елюкпа ун шăллĕ — Тимуш амăшĕпе Тимуш куккăшĕ — аякри тăванĕсем патĕнче ӳссе çын пулнă. Йĕрккеллĕ вĕренеймен. Вырăсла пĕлме кирлине те Тимуш амăш хулана килсен тин туйса илнĕ.

Халĕ вăл пĕтĕм вăйне ывăлне парать. Хăйĕн мĕн енчен ăнман ун пурнăçĕ — Тимушăн ăнтăр, тет.

«Эп вĕренеймерĕм, ухмаха юлтăм, ун вырăнне ывăлăм вĕрентĕр. Эп йăнăшсем нумай тунă, кăтартакан пулман мана, ун вырăнне ывăла тӳрĕ çул çине кăларасчĕ», тесе шухăшлать вăл.

Анчах темле тăрăшсан та тумхахсем тупăнсах пыраççĕ. Ывăлĕ ашшĕ-амăш хӳттинче çитĕнĕ тенĕччĕ — пулмарĕ ав.

Тимуш халех итлесшĕн мар, тулашать. Темĕн хирĕçлет ун ăшĕнче. Мĕскер вăл, çав хирĕç мăкăлтаканни — пĕлмест амăшĕ. Вĕрен, вĕрен тесе тăнă çĕртех ачи хуткăранташран писе пуçларĕ. (Тен, шăп кăна вăл çавăнпа вĕренесшĕн марри пирки амăшĕ шухăшлама пĕлмест.) Хушнă вăхăтра Тимуш çывăрма выртасшăн мар. Урама тух тесен, пӳртре ларасшăн. Ĕçре çеç савăнăçлă. Неушлĕ вăл та амăш пек хура ĕçпе кăна пурăнĕ?

Тимуша илес пулсан, амăшĕ туса панă читлĕхре тăвăр ăна — çавă паллă. Аллинчен çавăтса çӳренине юратмасть вăл. Ӳксе те пулин, хăй тĕллĕн утса пăхасшăн.

Тимуш ĕçе ермешесси акă мĕнрен пуçланнă.

Амăшĕ ун нихçан та ĕççĕр лармасть. Кăнтăрла вăл заводра. Киле килнĕ-килмен апат пĕçерет. Чашăк-тирĕк çăвать, чӳрече янаххисемпе сĕтел-пукана шăлса илет. Ĕçĕ те ун ĕç пек мар, вăйă евĕрлĕ кăна. Калаçать вăл, кулкаласа мĕн те пулин каласа парать. Çав вăхăтра хăй кĕпине е пальтоне пăсса хунă. Кĕскетет, пĕрет, сарать — мода мĕнле улшăнса пынине кура. Унтан тĕрлĕ сăрпа пĕвет. Вара кив кĕпе-тумтирех вĕр-çĕнĕ пулса тăрать. Çапла тăхăнсах Тимуш амăшĕ такамран та таса çӳрет.

Амăшĕ ытла халтан кайнине курман Тимуш. Хурланнине те асăрхаманччĕ. Пĕр каçхине çапла вăраннă та вăл урай варринче, çĕрте, макăрса ларакан амăшне курах кайнă. Ун аллинче темле çыру пулнă. Йĕри-тавра урай çумалли хатĕрсем сапаланса выртнă.

Тимуш çав самантра хăй те кăшт çеç макăрса яман. Унăн вырăн çинчен анса амăшне ыталаса илесси килнĕ, анчах вăтаннипе, амăшĕ кăмăлсăр пуласса туйнипе тăман вăл.

Ирхине тата тепĕр пăтăрмах сиксе тухнă. Çăкăр илме каякан Тимуш пусма çинче сасартăк хăйĕн ашшĕне тĕл пулнă. Савăнăçлă ашшĕ ăна тытса шăтăр чăмăртанă та картлашкасем тăрăх çӳлелле ыткăннă. Хăюллă пулма ĕçнĕ пулас вăл, унтан эрех шăрши кӳ! çапса юлнă.

Ача магазина мĕнле çитсе килнине астумасть. Те вĕçсе килнĕ вăл, те урапах. Алăкран ăна хирĕç хĕремесленсе кайнă ашшĕ сирпĕнсе тухнă. Тимуш çине алчăраса кăлин пăхнă та вăл пим те каласа ĕлкĕреймен, мĕнле тухнă—çав сулăмпах пусма тăрăх аялалла шапăртаттарса чупнă.

Алăк умĕнче кĕтсе тăнă, тăнă Тимуш— таврăнман ашшĕ. Амăшĕ те нимĕн шарламан. Ачине вăл пĕлмесĕр юлчĕ тенĕ пулас.

Çук, ытла та кăткăс пурнăçпа пурăнаççĕ мăннисем. Ниепле те пĕлсе пĕтерме çук вĕсене. Халь кăна ăнланнă пекчĕ амăшне, тепĕр самантран пăхан — ютран та ют вăл...

Урăх килмен ашшĕ. Çыру та яман. Анчах хăй инçе те мар янăнса çӳрени пурпĕр сисĕнсе тăнă. Тимуш та туйнă ăна.

Пĕрре, ир тăрсан, пурте пĕрле пулайĕçиннчĕ, тесе ĕмĕтленет Тимуш — ашшĕ, амăшĕ... Емĕт кашнинчех çитменнине çеç чухлаймасть-ха вăл.

Кухньăра темскер чăш! туни илтĕнчĕ. Йĕпе çĕтĕк тытнă Тимуш унталла васкарĕ. Амăшĕ яшка лартса хăварнă-мĕн, çавă тăкăнма хăтланать.

Тимуш газне пĕчĕклетрĕ.

Кравать айне çума урайне тăсăлса выртнăччĕ кăна вăл, алăка шакăртаттарчĕç. Тимуш йĕпе аллипе пăрчĕ-пăрчĕ питĕркĕçне — уçаймарĕ.

— Анне, эсĕ-и ку?— тесе хăраса ыйтрĕ вăл коридоралла.

— Эпĕ аннӳ,— терĕ тултан çинçе сасспа, кулкаласа, палламан арçын. Тен, ашшĕ? Çук, вăл мар.

— Эпĕ уçаймастăп,— терĕ Тимуш хуллен. Аллине шăлса типĕтнĕ пулсан, уçатчĕ вăл, паллах. Ку этемми такам-çке. Тимушсен кӳршĕ карчăкĕ пек, кашни пыракан çынтан «Эсĕ кам?» тесе ыйтса ларма çук. Пĕлмен çынна амăшĕ те питех

# КУККĂШĔ ТАТА ЫТТИСЕМ

кĕртме хушмасть.

— Аннў ăçта?— ыйтрĕ ют çын кăмăллăн. Хальхинче вăл хăй сассипе каларĕ.

— Магазинта,— терĕ Тимуш, алăк патĕнчен кайма тытăнса.

— Час килет-и вăл?

— Паян канмалли кун вĕт.

Ку ĕнтĕ вăл — паян канмалли кун, черетсем пулма пултараççĕ, тен, анне часах та таврăнаймĕ-ха, тенине пĕлтерчĕ-ши е урăх мĕн те пулин тесе, ют çын ача сăмахĕ пирки шухăша кайса тăчĕ пулас, пĕр хушă чĕнмерĕ.

— Эпĕ сан кукку,— терĕ вăл пăртакран тин.

Тимуш вăл вăхăтра хĕрсех кравать ури таврашĕсене нӳрĕ тутăрпа сăтăратчĕ. Унтан пӳлĕм кĕтесĕсене, сĕтел айне, кухня урайне сĕрсе тухрĕ. Ыттине ĕнтĕ «тӳр пилĕк» текен мелкепе çеç сĕрмелле, вăл часах пулать...

Урайĕ хуралман та-мĕн — тутăрне пĕрре пăрнипех çитрĕ. Тимуш сывлăша шăршласа пăхрĕ. Хваттер чиперех уçăлчĕ ав. Мĕн каласси пур, çунипе çуманни пĕр мар çав.

Амăшĕ урокпа хĕсĕрлес мар пулсан, урайне Тимуш çывăрма выртас умĕн те сĕрсе илме хатĕр. Тархасшăн.

Мĕншĕн лайăх ăна ĕçре? Шухăшламасăр çӳреме май килнĕрен, тейĕччĕ Тимуш мăн çын пулас пулсан. Ал вăйĕпе тумалли ĕçре этем кирек хăçан та шухăшран тарма пултарать. Çутта пăрса сӳнтернĕ пек, ăстăна «пăрса хурать» те — пулчĕ те. Ĕçле те ĕçле вара машина пек.

Ытти чухне этем хăйпе хăй куçа куçăн пурăнать...

Лайăх Тимуша ĕçре. Темле ыррăн-ыррăн туйăнса каять, чĕрине ăшă хум çупăрлать. Ӳссен вăл, тен, чăнах та хуралçă пулĕ? Амăшĕ калать-çке-ха: «Вĕренмесен, эсĕ сысна кĕтӳçи е хуралçă çеç пулатăн», тет. Вĕренесси килмест ав унăн. Яланлăхах. Ĕмĕрлĕхе. (Кĕске вăхăта кăмăл сивĕннине те Тимуш ĕмĕрлĕхе тесе шутлать. Тусĕпе ятлаçнă — ĕмĕрлĕхе тăшмансем. Виçĕ сехетрен мирлешнĕ — каллех юлташсем. Ĕмĕрлĕхе.) Амăшне кӳрентерес мар тесе çеç вăл аллине кĕнеке тытса ларать. Эппин паллă — вăл хуралçă пулать. Анчах мĕншĕн «хуралçă çеç»? Тимуш шухăшĕпе, ун пек хисеплĕ ĕç те çук. Вăл пăшаллă. Çĕр çывăрмасăр халăх пурлăхне сыхлать. Çынсемшĕн тăрăшать. Тимуш та ав амăшне çăмăлтарах пултăр, тет.

Ĕçĕн хакне те кăштах туять вăл. Кĕпе çума кăна мĕн чухлĕ вăй кирлĕ. Амăшĕнчен курмалăх Тимуш та пĕрре кĕпине çунă. Типсен пăхать те — хури-мари ним те кайман...

Ĕнтĕ, вуласа ларнă пек туса, аллине кĕнеке тытма та юратчĕ, татах ĕç пĕтмен пек туйăнчĕ те, вăл тӳсеймесĕр диван çивиттине тӳрлетрĕ, чӳрече çинчи чечеке шăварчĕ.

Вăт халь ĕнтĕ... Анчах хатĕрленме кая пулчĕ. Пӳрте тулли сетка йăтнă амăшĕпе чăматанлă арçын килсе кĕчĕç...

Вăхăт нумай та иртмерĕ, амăшне хăраса кĕтнине те, хусканнă кăмăлне те — йăлтах манса кайрĕ Тимуш. Килнĕ çын пĕтĕмпех тыткăна илчĕ. Тимушпа вĕсем уйрăлми туслашрĕç. Паллах ĕнтĕ — ĕмĕрлĕхе...

Çак самантран пуçласа, кун, патак пек, шартах икке хуçăлчĕ. Халиччен хыçала юлчĕ, малалла тĕлĕнмелли пуçланчĕ.

...Килнĕ çын тĕксĕм ача йĕри-тавра кулкаласа утса çаврăнчĕ.

— Ну-ка, çакă-и-ха вăл Тимуш? Тимуш-и эс?

Ача чĕнмерĕ.

— Çавă!— терĕ çын хăех, Тимуш умне тăрса.— Пысăкланнă эс, тăванăм, палламалла та мар. Кĕçех мана хăваласа çитетĕн. Астăватни мана? Иксĕмĕр хула курса çӳренĕччĕ, Атăл леш енне каçса, шыва кĕнĕччĕ. Миçереччĕ-ха эс ун чухне? Миçереччĕ-ха вăл, Елюк?

— Виççĕре,—терĕ амăшĕ кухньăран.

Çук, астумасть ăна Тимуш. Ырă çын кĕтнине тӳрре кăларайманшăн çав тери ӳкĕнсе тăчĕ вăл. (Çын ыр кăмăлли паллах. Вăл килсе кĕнĕренпе пӳрт те çуталса кайрĕ.) Таçта курнă та пек ăна Тимуш, курман та пек. Пуринчен ытла курнă пек. Этемми аса юлмаллискер хăй: çӳллĕ, тĕреклĕ. Пичĕ хĕрлĕ, куçĕ савăнăçлă.

— Хули те ӳснĕ, Тимуш та ӳснĕ,—тесе, хăна куçĕпе стена çумĕнчи сăнӳкерчĕкĕ çине вĕлт кăтартрĕ.

Амăшĕпе юнашар тăракан çын çине пăхрĕ те Тимуш тинех палласа илчĕ.

— Кукка,— терĕ вăл хăюсăррăн.

— Тĕрĕс, палларăн!—савăнчĕ хăна.— Кукку,— çирĕплетрĕ вăл тепĕр хут. Тимуша, яшт çĕклесе илсе, хăй çумне чăмăртарĕ.— Ну, мĕнле пурăнатăн, тăванăм?

— Лайăх,—терĕ Тимуш хуллен.

Куккăшĕ ăна урайне антарса тăратрĕ те сăнаса пăхрĕ.

— Чирлĕ мар-и эс, Тимуш? Ма пит пусăрăнчăк?

— Айхи уçăлман, çавăнпа,—терĕ тĕпелтен амăшĕ.

Чăматанĕнчен хăна пĕр тĕркĕм япала туртса кăларчĕ.

— Ку — мана манманшăн.— Тимуш хулĕ çине вăл хĕрлĕ костюм уртса ячĕ.— Йĕлтĕрпе ярăнма. Пур-и йĕлтĕрӳ?

— Çук,— терĕ Тимуш.

— Туянатпăр!— шантарчĕ куккăшĕ.— Апат çисенех пасара кайса килĕпĕр... Ку сана, Елюк. Халат. Ку акă мана.— Сĕтел çине вăл пĕчĕкçĕ эрех кĕленчи кăларса лартрĕ.

— Спаççипă, Ваçук,— терĕ Тимуш амăшĕ, сĕтел майлаштарма тытăннăскер, шăллĕ çине ытараймасăр пăхса.— Нумай тăкакланнă эс.

— Пустуй... Сире пĕрер упа тир кĕрĕкĕ çĕлетсе парсан та, ытлашши пулмастчĕ-ха та, атя тепĕр чух ĕнтĕ. Халь васкамалла пулчĕ.

— Килесси пирки питех асăнмастăрччĕ те, эп шухăшламан та...

— Çыру пычĕ те ара...

— Элекçей çырать-и?

Куккăшĕ, ĕшенчĕклĕн:

— Çавă.

Ашшĕ ятне илтнипе Тимуш сывлама та чарăннăччĕ, амăшĕпе куккăшĕ шăп пулчĕç.

«Аха, атте пирки вĕсем иккĕш юлсан калаçасшăн», тесе шухăшларĕ Тимуш. Вăл хĕпĕртерĕ. Эппин майлашăнать пуль-ха ĕç, темиçе пин çухрăма куккăшĕ ахаль килес çук. Тимушăн унпа часрах хула курма тухасси килчĕ. Тен, мĕн те пулин систерĕ вăл...

Апат çинĕ чух, куккăшĕ тайгара сунара çӳрени çинчен каласа пачĕ. Вĕсен ялĕ сĕм вăрман варринчех ларать иккен те, тепĕр чухне çĕрле упасем ял хушшине те пырса кĕреççĕ, тет.

Куккăш калавне Тимуш кино курнă пек курса ларчĕ. Çын калаттине вăл итлеме пĕлмест, тӳрех «курать».

Апат хыççăн та вĕсем хулана час тухаймарĕç. Куккăшĕ алă çума пычĕ те, кран тумланине кура, ăна майлаштарчĕ. Алăк хăлăпĕ пушаннăччĕ — ăна хытарчĕ. Вешалка чалăшнăччĕ — тӳрлетсе çапрĕ...

Тимуш вăл хушăра, ытти чухнехи пек, амăшĕ кăшкăрса пăрахасса, «эс мĕн урок тума лармастăн» е «уçăлма тухмастăн» тесе каласса кĕткелерĕ. Куккăшĕнчен вăтаннипе ун пичĕ малтанах пĕçерсе тăчĕ. Анчах амăшĕ шарламарĕ. Юлташĕсене Тимуш çĕнĕ костюмне кăтартса кĕчĕ. Унтан йĕлтĕр илме каясси пирки пĕлтерчĕ.

...Тротуар çинчи халăх тĕркĕшĕвĕнче пĕр ачапа мăн çын асăрханса утса пыраççĕ. Ачи хура пуçлă, лутра, имшеркке, темле аса юлман сăнлă. Çынсем хушшинче вăл палăрмасăр çӳреме тăрăшни сисĕнет. Ун пек, тен, ыррипе пĕрле усалли те иртсе кайĕ тет-ши? Хăйпе пыракан çынна та хăнăхса çитмен-ха вăл — унран ютшăнмасть, анчах ун çумне те тĕршĕнмест, йĕри-тавра хăраса пăхса, пурне те çул парать.

Мăн çынни ячĕпе кăна мар мăн. Вăл ялти сывлăшпа та ялти ĕçпе пиçĕхнĕ пулас — çӳллĕ, патвар, хĕрлĕ питлĕ те пысăк хĕрлĕ алăллă. Хаклă йышши хура костюмпа шурă нейлон кĕпе ăна пушшех ялти тĕс параççĕ. Çанталăк уçă пулсан та, çĕнĕ костюмпа пăчă ăна. Çынсем хушшинче вăл такама таптаса каясран хăранă евĕр асăрханса утса пырать. Пур япала çине те интересленсе пăхать. Хула савăнтарать ăна, хăйпе юнашар ача шухăша ярать, çын çине таптаса кĕрекен хĕрарăмсенчен вăл евĕккĕн аяккалла пăрăнса тăрать.

Вĕсем Тимушпа ун куккăшĕ.

Шупашкарта кĕркунне. Анчах ниçта пĕр салху тĕс çук. Тӳпе тăрă-тăрă, сывлăш уçă—хапрăк-заводсем ĕçлемеççĕ паян, машинăсем нумайăшĕ гаражра. Хулари кашни кĕтес, кашни çурт кулнă пек ялкăшса, çуталса ларать. Тротуар хĕрринчи çăкасене, кив хуларан юлнă çӳллĕ тирек йывăçĕсене юри капăрлатнă тейĕн — хĕрлĕ-сарă. Урамри çынсем савăнăçлă — йăл та йăл кулаççĕ. Йăлăмран ешĕл хырлăх илĕртет—каçса кан, ырă çын. Атăл çинчи катерсемпе паромсем ытарайманнипе ниçта тытăнса тăраймаççĕ: леш енне каçсан, ку çырана васкаççĕ, кунта килсен, йăлăма васкаççĕ. Чупаççĕ çапла кунĕпе.

Тимуш куккăшĕ хаш сывласа ярать.

— Лайăх сирĕн кунта!

— Ма куçса килместĕр эппин?— тет Тимуш.

— Çемье пур-çке. Пĕрре кайса вырнаçнă та, пурнатпăр. Хура кĕркунне халь унта. Çăмăр çăвать...

Амăшĕ пек: тепĕр чухне пирĕн те ку вăхăтра йĕпе-сапа пулать, тесшĕн те Тимуш—шарламасть. Ан тив, хăна кунта яланах çавăн пек уяр тесе шутлатăр.

— Инçе-и вăл сирĕн хула?

— Хула мар, ял. Кунтан тăватă пин çухрăм ытла, тайга варринче.—Хăна унти ырлăх-пурлăхсем çинчен шухăшлать пулас, сăмахне çапла вĕçлет:— Пырса кур-ха ак пĕрре — ӳкĕнмĕн.

Тимуш ăнланать ăна.

— Мăйăр пулсан пырăп,— тет вăл. Чĕнмесĕр утсан-утсан, татах хушса калать:— Укçа ĕçлесе илсен...

— Ну, паллах ĕнтĕ.

Çынсем тĕкеççĕ вĕсене. Хăваласа çитеççĕ, иртсе каяççĕ. Çын юхăмĕ çырмари пăр пек чăштăртатса шăвать, пӳлĕне-пӳлĕне ларать, туратланса каять.

— Эп астăвасса... Шупашкар урамĕнче... пĕр харăс... ик-виçĕ çынран ытла... çӳреместчĕ,— тет куккăшĕ, вăрманти йывăçсем хушшипе утнă евĕр утса.

Ĕлĕкхи Шупашкар Тимуша ача-пăча хули пек курăнать. Пĕчĕккĕ вăл. Курăклă. Лутра. Тӳлек. Урам варринчех ачасем футболла выляççĕ. Пĕр милиционер вĕсене кам та пулин пырса чăрмантарасран сыхласа тăрать. Машинăсем чарăннă та вăйă саланасса кĕтеççĕ...

Спорт магазинĕ тĕл пулчĕ.

— Йĕлтĕр пур-и сирĕн?

— Ма халех? Хĕле кĕрсен килĕр.

Куккăшĕ Тимуша пуринчен те хитре пек туйăнать. Мĕнле кĕрнеклĕ вăл, кăмăллă сăнлă, таса тумлă. Тимуш хăй те çуса якатнă «çĕнĕ» кĕпепе, çавăнпа пĕтĕм хула

вĕсен çине çеç пăхать пек те, хĕпĕртенĕ Тимуш малтанах ним курми-илтми пыратчĕ. Хăйпе пĕр класра вĕренекен ача хирĕç пулсан, Тимушăн куçĕ хуралса килнĕччĕ. Ури çыхланнипе вăл кăшт кăна çĕре чикĕнсе анмарĕ.

Халь лăпланнă вăл. Никам та тĕсесех пăхмасть-мĕн вĕсене. Кашни хăйĕн ĕçĕпеваскать пулас.

Тимуш куккăшĕ пуçне каçăртнă та çӳллĕ çурт умĕнче тĕлĕнсе тăрать.

— Кур-ха, тупата, мĕнле яштака. Физкультурник пек вĕт. Тăхăр яташлă-и-ха?

— Тăххăр.

— Пур енчен те лайăх, çăмăл хапалă пӳрт, хăпарса çӳреме çеç кансĕр пуль.

— Мĕн кансĕрĕ,— терĕ те Тимуш калас сăмахĕпе куккăшне тĕлĕнтерсе пăрахăп тесе хĕрелсе кайрĕ.— Унта машинăпа хăпараççĕ. Экскаватор ятлă.

Анчах куккăшĕ ним каличченех, вал тăрăхласа йăл кулниччен сисрĕ Тимуш: йăнăш персе ячĕ-мĕн вăл. Эппин ун пĕрре кĕрсе пăхмалла пулать ку пӳрте. Е шкулта ыйтса пĕлмелле. Хăйсен вĕсен пилĕк хутлă кăна та, çуранах хăпарса çӳреççĕ.

Ма экскаватор терĕ вăл? Çавăн евĕрлĕ машинăпа-и, мĕн-и, тaçта хăпараççĕ тенине илтнĕччĕ те — çавăнпа.

Куккăшĕ Тимуша юратса çурăмĕнчен çеç лăп-лăп çупăрларĕ.

— Ну, тата мĕн курăпăр-ха? Тен, Симĕс пасара çитер? Йĕлтĕрсем пулаканччĕ унта ĕлĕк.

Çынсем умĕнче тӳрлетсе намăс кăтартманшăн ăшра тав туса, Тимуш ăна аллинчен тытрĕ.

Çула май вĕсем Ленин площадьне курса çаврăнчĕç. Владимир Ильич памятникĕ умĕнче Тимуш куккăшĕ карттусне хывса тытрĕ. Унтан вĕсем, Ленина çул панă евĕр, кăштах айккине пăрăнса тăчĕç. Ĕçе васканă пек вашкăртса пыракан çулпуç сăнарĕ ĕçлĕ халăх хушшинче пит те килĕшӳллĕн курăнчĕ Тимуша. Тата пĕлмен çынсем те мар-мĕн Владимир Ильич Лениншăн кунти халăх. Çамрăкранпах вăл чăвашсемпе хутшăнса пурăннă, пĕр чăваша темле шкула кĕме те пулăшнă тет ав. Ун çинчен ачасене класра Тимушсен учителĕ каласа панăччĕ.

Пĕр-пĕр халăх мĕнле пурăннине пĕлес тесен, ниçта та мар, пасара çеç кайăр. Унта эсир вăл тăрăхра пурлăх мĕнлине те, çынсен ăс-тăн интересĕсене те, халăхăн культура шайне те—пурне те туйса илетĕр. Пĕтĕçтерсе каласан, пасар вăл — халăх пурнăçĕн тĕкĕрĕ.

1940 çулта Одесса пасарĕнче пулма тиврĕ. Пĕлекенсем каланă тăрăх, унта тăван аннене çеç тупса илме çук-мĕн, ытти — вĕçенкайăк сĕчĕ тaранччeнех — пурте пур. Мĕнле кăна чĕлхепе калаçмаççĕ унта, мĕн кăна пулса иртмест вăл пасарта! Пĕр кун хушшинче мар, пĕр вăхăтра, çак самантра, ак халĕ. Юрлаканни, макăраканни, ташлаканни, ӳсĕр выртаканни; сутаканпа илекен; çапаканпа таракан; шăвшав, кăшкăрашу, харкашу... Музыкăпа машина сасси. Кăкăра хуплакан тусанпа тинĕс варкăшĕ. Хĕвел шевлипе хитре хĕрсен кулли... Н. И.Шелепи те шутласа кăлараймĕччĕ унта мĕн-мĕн пулса иртнине, мĕн сутнине. Одесса пасарĕ мана тĕлĕнтерсе хытарса ячĕ, хăратса пăрахрĕ, савăнтарчĕ, тарăхтарчĕ, хăлхана хупласа хучĕ, куçа уçрĕ—пурте пĕрле. Ак ăçта иккен вăл Вавилонри столпотворени, терĕм вара эпĕ.

Кавказри пасарта та пулса курнă эп. Чи малтан мана унта хĕвел ăшшипе çынсен хавас кăмăлĕ килĕшнĕччĕ. Унтан çырлапа сад çимĕçĕ нумайййи тĕлĕнтерсе пăрахрĕ. Урамĕ-урамĕпе иçĕм çырли, айва, лимон, апельсин, персик, гранат, мандарин, çĕр çырли, аçтăрхан măйăрĕ, черешня тата ытти эп пĕлмен çимĕçсем купаланса выртаççĕ, пурне те тутанса пăхма мар, курса пĕтерейĕмĕн. Вĕсене чĕрĕлле, типĕтсе, консервласа сутаççĕ. Эрех тăваççĕ. Килте тунă арака (эреке) пички-пичкипе ларать, çумне çакса янă куркапа тутана-тутана пăхсах ӳсĕрĕлме пулать.

Пирĕн патрипе танлаштарсан, пурте ытлашширех унта:— хĕвел ăшши те, çавна пула çутçанталăк ырлăхĕ те, халăх пурлăхĕ те. Йывăç çурт çук вĕсен. Кашни çемьен тенĕ пек машина. Пурин те сад.

Кавказри пасар Чăваш çĕрĕнчи акатуя аса илтерет. Çынсен кăмăлне вĕри хĕвел хускатать пулас е вăйĕсене ниçта хума çук-ши, пĕтĕм пасар хуран пек çаврăнса, пĕтĕрĕнсе тăрать. Шавлать, юрлать, кĕрлет. Савăнăç тапать кашнин питĕнчен. Çатма çинче какай ăшаланать, вучахра шашлык пиçет... Эрех пăкки сирпĕнсе тухнă илтĕнет.

Ресторанĕнче те çавах. Хăлхана шав хупласа хурать. Çĕр çĕмĕрсе кăшкăрашаççĕ, юрлаççĕ, кулаççĕ.

— Ма ун пекех шавлаççĕ сирĕн?— терĕм те эпĕ, официант тĕлĕнчĕ кайрĕ.

— Вĕсем хăйсен килĕнче вĕт!—терĕ.

Пирĕн патрипе танлаштарсан, кăнтăрта лайăхрах-çке, теекенсем те тупăнĕç. Тепле. Пĕлместĕп. Кама мĕн пуль. Маншăн пулсан, унта эмелленме, канма, курса çӳреме лайăх. Пурăнма тесен, эпĕ çуран та пулин хамăр Чăвашах таврăнăттăм...

Халь ĕнтĕ пирĕн пасара кĕрер. Халăх кунта та тулли, пурпĕр лăпкă, «чинлă». Кăшкăрса юрлама мар, калаçма та хуллен кăна калаçаççĕ. Çын çинче урă пуççăн шавласа çӳресе çынсене хăв çине пăхтарас йăла çук вăл пирĕн. Юрра илес пулсан, ун хăйĕн вырăнĕ, хăйĕн вăхăчĕ пур. Хăшпĕр халăхсен пасар — ĕççĕр аптранă вăхăтра тĕл пулса калаçмалли вырăн теççĕ. Пирĕн çук ун пекки. Ялхуçалăх ĕçĕ те пирте пушă вăхăт сахал хăварать.

Пасарта пурте ĕçпе çӳрени сисĕнет: сутаканни—çулталăкне мĕн те пулин пĕрре-иккĕ — сутма, илекенни илме килнĕ. Килнĕ — хăйне кирлине туяннă е сутнă—кайнă. Çавăнпа халăх пĕрмай улшăнса тăрать кунта, шавласа калаçмалăх пĕр-пĕринпе паллашса та ĕлкĕреймеççĕ. Ку—пĕр енчен. Тепĕр енчен тата çынnисем те тӳлекрех, «сивĕрех» пулас кунта.

Чăваш лăпкăн пурăнма хăнăхнă. Шавлăн, пурне те кăтартмалла пурăнма пĕлмест вăл. Ĕçĕ хăйне пĕтĕм халăх куçĕ умне кăларса тăратсан та, чăваш ыранхи ĕçĕ пирки, çĕнсе илеймен чăрмавсем пирки шухăшлать пулас, пуçне каçăртмасть. Çав-çавах лăпкă вăл, сăпай. Шухăшлă.

Кăнтăр енчен килнĕ усламçăсем малтанах пирĕн пасарта та кăшкăрашма, айкашма хăтланса пăхаççĕ. Анчах нумай та вăхăт иртмест, курăсăн—вĕсене те шăплăх парăнтарнă. Куç-пуçĕсене вылятаççĕ, урюк-мурюкĕсене виçеççĕ, кĕсйисене укçа пĕтĕре-пĕтĕре чикеççĕ — пĕр сăмахсăр, мăнкăмăллăн.

Мĕн сутать те мĕн илет чăваш çынни? Тĕп пурлăхĕ ун... Э, каласа пĕтересси пулмарĕ ав, хапхаран Симĕс пасара пирĕн туссем килсе кĕчĕç. Тимуша куккăшĕ аллинчен çавăтнă. Хăй йăл кулнă пек тунă та питне улăштармасăр пĕр сутуçă патне пырать, теприпе сăмах хушать. Ялти йăлапа, вăл мĕнле япала мĕн хак тăнине ыйта-ыйта пĕлет, пахча çимĕçĕсене çавăркаласа пăхать. Кишĕр ун аллинче уг вĕренлемелли шалçа пек курăнать. Панулми Тимуш пуçĕнчен пысăк. Çĕрулми, сухан, пăмитур, хăяр, кăмпа, măйăр нумай..

— Кăçал сирĕн хĕл ăшă пулать, сухан хуппи пит çӳхе,— тесе пĕлтерчĕ Тимуша куккăшĕ хуллен.

Вĕсем аш-какай павильонне кĕчĕç. Аш кунта никам çисе пĕтерес çук пек—вăрăм сĕтелпе тенкел çинче, стена çумĕнче.

«Мĕнле хăрамаççĕ-ши ку вăхăтра выльăх пусма?—шухăшларĕ Тимуш куккăшĕ.— Илекен пулмасан, тăварласа лартмалла-и?»

Анчах пур пулас илекенсем — кашни сутуçă патĕнчех çынсем вĕлле шăтăкĕ умĕнче пыл хурчĕсем йăшăлтатнă пек йăшăлтатаççĕ. Пĕрин çывăхĕнче çеç никам çук. Тăмран çыпăçтарса тунă пек хускалми питлĕ этем сап-сарă какай сутса тăрать.

— Ку сан мĕн ашĕ?

— Курмастăн-им — сурăх.

Тимуш куккăшĕ пĕр татăкне илсе çаврăкаласа пăхрĕ те: «Качака», тесе хучĕ. Аш хуçи илтмĕшех пулчĕ,



Тимуш валли вĕсем йĕлтĕр туянчĕç. Хĕвелçавăрнĕш, кавăн вăрри, măйăр та илес терĕç. Măйăрĕ кăçал пулас тесех пулнă-мĕн—тутлă, шултăра, çӳхе хупăллă, шăлпа кăшт хĕстернипех шăкăлт та шăкăлт катăлать. Урăх шухăшпа çӳренипе Тимуш малтан вăл-кусене асăрхаманччĕ, халь пăхать те — măйăр, хĕвелçавăрнĕш, кавăн вăрри хупписене пурте çĕре пăрахаççĕ-мĕн, ура айĕнче шатăртатать кăна.

Урама тухрĕç — унта та çавах. Çынсем такам çине тарăхнă пек сурса пыраççĕ: «Ак сана валли ĕç. Ме, шăл!» тенĕнех туйăнать. Ура айĕ шатăр, шатăр, шатăр тăвать.

Тимуш хăй ăшĕнче шутласа пăхрĕ. Пĕр çак лаптăка шăлнипе мĕн чул çӳп-çап пуçтарăнĕ кунта. Пасар вырăнне шăлсан тата? Пĕтĕм хулине тасатса тухсан, мĕн чухлĕ пулĕ? Темиçе çĕр автобус вĕт!

Тата миçе çĕр çын кирлĕ ăна шăлса тасатма! Çитменнине пĕр кун хушши çеç те мар-çке, кашни кун шăлса тăмалла. Мĕн чухлĕ вăй ахаль сая каять! Вăхăт усăсăр иртет.

Тарăхнăçем тарăхса, Тимуш урама çӳпĕлекенсем çине пăхса илчĕ. Камсем вĕсем, çак çын ĕçне ним вырăнне хуманскерсем? Хăйĕн тăшманĕсем тесе шутлать вĕсене Тимуш. Çав тери путсĕр çынсем пулассăн туйăнаççĕ вĕсем ăна. Анчах пăхать те—чипер çынсемех пек. Сăнран çеç нумаях пулмасть ялтан килнĕ евĕрлĕ. Акă пĕр хĕр, сăмахран. Тимуш амăшĕнчен кăшт çеç лутрарах пуль вăл, хитре. Хĕвелçаврăнĕш лачăртаттарса пырать. Васкаса çинипе хăйĕн тути хĕрри кăпăкланса кайнă. Хура костюмлă яштака йĕкĕт кавăн вăррине шĕкĕлчесе утать...

Хăйсен килĕнче мĕнле-ши вĕсем? Унта та урайне сурса, çӳпĕлесе лараççĕ-ши е çынсене çеç хисеплемеççĕ, хăйсене юратаççĕ? Ачасем хушшинче те курнă ун пеккисене Тимуш: килĕсенче вĕсем пек тирпейли çук, коридора е урама тухсан, çав ачасенех палламалла мар—стенасене çырса, чĕркелесе пĕтереççĕ, урайне çӳпĕлеççĕ...

Камран курса вĕренеççĕ вĕсем ăна?—тет автор та Тимушпа пĕрле.

Мĕн, эсир ашшĕ-амăш пирки шухăшлатăр-и?—тейĕç пĕрисем.

Пĕр-пĕринчен курса вĕренеççĕ!— пат татса хурать ватă вулакан.

Тупнă «проблема», тейĕç аслă ĕççем пирки çеç калаçма юратакан ортодокс-критиксем. Мĕн тăвас тен эс—проблема çав. Çынна хисеплеме, патшалăх пурлăхне хăваnни пек шеллесе тыткалама вĕрентесси — пысăкран та пысăк проблема. Çав ĕçе ăнăçуллă тума тытăнсан, коммунизм та инçе юлмĕччĕ вара.

...Пăх-ха, мĕн хăтланаççĕ, тупата! Çӳп-çап пăрахмалли ещĕк юнашар, пирус тĕпне çĕре переççĕ. Çуллă кукăль çинĕ хыççăн алла шăлнă хаçат таткине чечексем çине вăркăнтараççĕ. Теприн тата аллинче хут çукчĕ пулас та, çăка тураттине çатăр сăтăрса илчĕ те пĕр ывăç çулçă асфальт

ҫине сапаласа ячӗ. Мороженӑй куркине ывӑтрӗҫ, ҫарӑк шуратса пӑрахрӗҫ...

Куҫ умӗнчех хулана вараламаҫҫӗ-ҫке! Мӗнле чармалла вӗсене?

Тимуш ҫавӑнта тем туса хурӗччӗ, мӑнтарӑн, ним тӑваймасть: пӗчӗккӗ вӑл. Кам итлетӗр ун сӑмахне?!. Хурах кӑшкӑрас—ухмах тейӗҫ. Кӑшкӑрма та хӑюлӑх ҫитерес ҫук пуль вӑл...

Тимуш ҫавӑн пек тулашса пынине сисмен куккӑшӗ пӗр ывӑҫ мӑйӑр хуппине урама шапӑр сапса ячӗ.

Хӑйне питрен ҫупнӑ пекех туйрӗ ҫакна Тимуш. Вӑл тротуар хӗррине пӑрӑнса тӑчӗ.

— Ну, кукка, тупата... Эс те пулин хӑть... Мӗнле вара...

Кӑшт маларах иртнӗ куккӑшӗ Тимуш патне ҫаврӑнса пычӗ.

— Мӗн пулчӗ тен?

— Мӑйӑр хуппине ара... ҫӗре сапрӑн.

— Э ара... уншӑн пулсан... Урам шӑлакансем пур вӗт.

— Вӗсем ывӑнаҫҫӗ,— хытӑ тарӑхнипе куккӑшӗ еннелле пӑхаймасӑр каларӗ Тимуш.— Хулара урама ҫӳпӗлеме юрамасть. Ырӑ мар ун пек!

Пӗтӗм хаярлӑхӗ пуҫтарӑнчӗ пулас ун сассине — чӗтренсе тухрӗ. Куҫне куҫҫуль тулчӗ.

Куккӑшӗ Тимуш ҫине хӑраса пӑхрӗ, ун хулпуҫҫи ҫинчи йӗлтӗрне тӳрлетрӗ.

— Ывӑнтӑн пулмалла эс. Йӗлтӗрне хам йӑтам-и?

«Йӗлтӗр илсе панипе тӗкрӗ. Хӑйне ҫилленнӗшӗн ӗнтӗ»,— тесе шухӑшларӗ Тимуш. Йӗлтӗрне вӑл хулпуҫҫи ҫинчен илсе хул айне хӗстерчӗ те ик аллипе тытрӗ. Ан та ҫулӑх — памасть.

— Хамах эп...

— Юрать ара,— савӑнсах килӗшрӗ куккӑшӗ. Вӑл урлӑ-пирлӗ сӑмахсене мӗнле те пулинирттерсе ярасшӑн пулас.—Урамне ӑна эп пӑрахичченех ҫӳпӗлесе тултарнӑ. Ыран эпир тӑнӑ ҫӗре тап-тасах пулать ак.

— Кӑнтӑрла каллех ҫӳпӗлесе тултараҫҫӗ,— ҫаплах шӑртланма чарӑнаймарӗ Тимуш.

— Мӗн тӑвас-ха ӗнтӗ — пурнӑҫ ҫавнашкал вӑл,— терӗ те куккӑшӗ, вӗсем малалла утрӗҫ.— Паҫӑр кӑна апат ҫирӗмӗр ав — каллех выҫа пуҫларӗ. Пурнӑҫ вӑл пӗр япаланах ҫӗршер хут тутарма юрататать ҫав. Кашни ӗҫе пӗрер хут ҫех тӑвас пулсан, хальччен эпир таҫта ҫитсе тухмалла. Е пӗтсе ларӑттӑмӑр-ши? Эс мӗнле шутлан, Тимуш?

Ача чӗнмерӗ. Ҫук ҫав, калас тенине калаймарӗ вӑл. Куккӑшӗпе вӑл мӑн ҫын пек йӗркеллӗн калаҫса пырасшӑнччӗ—хулара ҫӳпӗлеме юрамасть, ҫӳп-ҫап ура айӗнче ванса тусан пулать, тусанӗ вӗҫсе ҫӑвара кӗрет... Хитри те хитре мар. Выльӑх ҫеҫ хӑй ҫывӑхне варалать. Этем — ҫут тӗнчери чи ӑслӑ чӗрчун — хӑй йӗри-тавра яланах илем тума тӑрӑшмалла...

Ҫавӑн евӗрлӗ шухӑшласа пынӑччӗ вӑл, анчах ҫавӑрса калаймарӗ те чӑркӑшса кӗрсе кайрӗ ав, вара хӑйӗнне те, куккӑшӗнне те кӑмӑлне пӑсрӗ. Ӗнтӗ ӗмӗрлӗхех урлӑ пултӑмӑр, тесе пырать вӑл халь. Урам тулли халӑха итлеттерме мар, пӗр ҫынна каласа ӑнлантараймарӗ вӑл. Хӑй тата ытларах тарӑхрӗ — ҫавӑ пулчӗ ӗнтӗ. Пӗччен юлса шухӑшласа пӑхас килет халь ун. Мӗн ҫинчен-ши? Ӑна вӑл хӑй те пӗлмест.

Куккӑшӗ Тимуша мороженӑй илсе пачӗ те хутне чӑмӑртаса... ҫӗре пӑрахрӗ. Ку ӗнтӗ юри хӑтланнӑ пекех пулчӗ. Анчах юри тумарӗ ӑна куккӑшӗ, хӑнӑхнипе хӑй те сиссе ӗлкӗреймерӗ...

— Ме, ҫи, Тимуш, уҫӑлтарать вӑл.

Мороженӑйне илессе илчӗ Тимуш, анчах хӑйне ҫирӗппӗн хытарчӗ — ҫимест вӑл ӑна. (Килне ҫитес умӗн аллинчех ирӗлме тытӑннӑ мороженӑя Тимуш шелле-шеллех ҫӳп-ҫап ещӗкне ячӗ.) Куккӑшӗ пӑрахнӑ хут малтан троллейбуссем чарӑнакан ҫӗрти тенкел хыҫне ӳкнӗччӗ, ҫил Атӑл енчен вӑштӑр вӗрчӗ те, вӑл Тимушсем хыҫҫӑн кӑлтӑр-кӑлтӑр-кӑлтӑр кусма тытӑнчӗ. Мӑшлатса утсан-утсан, Тимуш тепре ҫаврӑнса пӑхрӗ. Хут чӑмӑркки, вӗсенчен юлас мар тенӗ пек, ҫаплах асфальт тӑрӑх кусать-мӗнха. Мӑкӑль-шакӑльсенчен ҫакланкалать хӑй, чарӑнкаласа тӑрать, унтан вӗҫерӗнет те малалла чупать. Тимуш виҫҫӗмӗш хут ҫаврӑнсан, курӑнмарӗ вӑл, кам та пулин ури айне лексе лапчӑнчӗ пулас.

Тимуш ҫапла шухӑшласа пычӗ: килне ҫитсенех вӑл каялла тухать те, куккӑшӗ пӑрахнӑ хута шыраса тупса, урнӑна ярать. Паллах ӗнтӗ, вӑл хута Тимушӑн паҫӑрах, куккӑшӗ умӗнчех илсе хумаллаччӗ те, хӑюлӑхӗ ҫитеймерӗ-ҫке. Кайран—ырӑ мар пек туйӑнчӗ...

Мӑннисен куҫӗ тӗлне пулмасанах лайӑх та ҫав пурӑнма, ҫук, асӑрхаҫҫӗ вӗсем...

Хальхинче ӑна куккӑшӗ ҫеҫ курса тӑчӗ. Вӑл та пулин ҫурӑмӗпе кӑна. Пӳлӗмри чӳрече патне кайса тӑнӑ та вӑл тӑрӑшсах урамалла пӑхать.

Амӑшӗ ваннӑра кӗпе ҫуни илтӗнет.

Тимуш кухньӑна чупса кӗрсе унта темскер каптӑртаттарчӗ. Йӗлтӗрӗпе ун куч кумрӗ. Вара ӑна кладовоя тӑратрӗ те коридоралла сулӑнчӗ.

Алӑк патӗнче Тимуша амӑшӗ тытса чарчӗ.

— Эс ӑҫта каян?

— Эп халех!— Тухасси пулмасть пуль тенипе Тимуш сасси кӑшт хытӑрах янӑрарӗ.

Амӑшӗ алӑкне шӑкӑр-шакӑр питӗрсе лартрӗ.

— Эс паян ахаль те кунӗпех тулта ҫӳренӗ-ха — ҫитет. Апат ҫиетпӗр те— урокна хатӗрле.

Хӑй тухас ҫуккине ӗненсе тӑнӑ ҫӗртех Тимуш, алӑк ҫине йӑванса, питӗркӗҫне уҫма хӑтланса тӑрмашрӗ.

— Килетӗп эп халех! Яр теҫҫӗ сана! Килетӗп эпӗ! Килетӗп!

Куккӑшӗ хута кӗрессе шаннипе те ҫинерех тӑчӗ пулас та Тимуш, хӑна ним шухӑшлама ӗлкӗреймерӗ — амӑшӗ Тимуша вырӑн ҫине йӑтса кӗрсе пӑрахрӗ.

— Вырт ҫакӑнта! Ниҫта та тухмастӑн эс!

Анчах Тимуш ҫав самантрах ҫӗре шуса анчӗ те алӑк патне ыткӑнчӗ, аллипе алӑка лӗп, лӗп ҫапрӗ.

— Уҫ тетӗп, анне! Килетӗп вӗт эп! Тархасшӑн уҫ ӗнтӗ!

Ачан пӗтӗм хуйхи-суйхи — ашшӗ ҫукки, амӑшӗ тулӑксӑр лӑскани, хӑй ӑна шеллени, юратни, курайми пулни, куккӑшӗнчен темӗн кӗтни, кӗтсе илеймесӗр тулашни — халӗ йӑлтах урама ӳксе юлнӑ ҫав хут таткинче пек туйӑнчӗ. Вил те кайса туп ӑна, ҫӳп-ҫап ещӗкне илсе пӑрах!

— Уҫ-ха, анне, тархасшӑн! Килетӗп-ҫке ӗнтӗ эп, ма ӗненместӗн?!

Тимуш антӑхса кӑшкӑрнипе юлашкинчен амӑшӗ те урса кайрӗ. Ачине ҫӑлса илчӗ те вӑл вырӑн ҫине йӑтса кӗрсе печӗ. Анчах те ача амӑш аллинчен вӗҫерӗнсе тухрӗ, те ывӑннипе амӑшӗ йӑтса ҫитерейменерӗ, Тимуш кровать хӗррине лексе ҫӗре мӑкӑлт ӳкрӗ те... урайӗнчех лӑпсӑр ҫывӑрса кайрӗ.

Кравать ҫумне сарнӑ ҫӗтӗк ҫинче, урайӗнче выртать вӑл. Тӳлеккӗн мӑш, мӑш сывлать. Ырхан хӑй—шакӑр шӑмӑ. Ӳсекен ача-ҫке. Ун ҫывӑхӗнче пӗр енче амӑшӗ хытса тӑрать. Тепӗр енче хӑна. Вӑл Тимуш патне пӗшкӗнчӗ те ачан мӑкӑрӑлса тӑракан кӗсйинчен тип ҫӑкӑр татки кӑларса хучӗ. Хӑйне майӗпен вырӑн ҫине илсе вырттарчӗ. Тимуш амӑшӗ ӗсӗклесе питне аллипе хупларӗ.

Кухньӑри сӗтел хушшинче аппӑшӗпе шӑллӗ шӑппӑн ларасҫӗ. Вӗсем Тимуш вӑранасса кӗтеҫҫӗ. Аппӑшӗ йӑлтах аптраса ӳкнӗ те тухтӑра чӗнтерме те аса илмен. Шӑллӗ кӑмӑлсӑрри палӑрать. Вӑл итлекелесе тӑрать, уҫӑ алӑкран пӑха-пӑха илет.

Пӳртре ӑшӑтнӑ купӑста яшки шӑрши кӗрет. Маччара шӑна ҫӑт-ҫат ҫапӑнкаласа ҫӳрет. Кӗркунне.

Ытла йывӑр пулса ҫитсен, аппӑшӗ алӑка таять те шӑллӗ ҫине пӑхма хӑймасӑр ҫапла каласа хурать:

— Мӗн те пулин пулсан... хам та пурӑнмастӑп.

Шӑллӗ аллине кӑна сулать.

— Ухмахланатӑн... Мӗн пултӑр? Нимӗн те пулмасть. Ҫывӑрса тӑрать те килет ак.

Аппӑшне кӑштах чун кӗрет.

— Усалли часах,— текелет вӑл, урӑх ним калама пӗлмесӗр.—Ырри час мар. Усаллине тума ӑс кирлӗ мар вӗт. Вӑл хӑй тӗссӗнех... мӗн тӑвать.

Вӗсем сисмесӗрех пӗрне-пӗри хавхалантарса ларасҫӗ.

— Нимӗн те пулмасть,—тет шӑллӗ тепӗр хут.—Пулма пултараймасть.— Вара унӑн сӑлтавне ӑнлантарса парать:—Ун пек ытла тӗрӗс мар пулнӑ пулӗччӗ.

Вӑл, алӑка уҫса, аякран Тимуш ҫине пӑхса илет.

— Ҫав маях выртать-ха. Ан тив, ҫывӑртӑр. Йӑхӑ вӑл эмелпе пӗрех вӗт.

Те савӑннипе кулма хӑтланать аппӑшӗ, те макӑрать вӑл...

— Тимуша эп юратмастӑп пуль тетни?

Шӑллӗ ӑна ҫапла каласа татать:

— Пӗри ачине ытла хытӑ юратнипе киллe ярса тӳнӗ тет, илтни эс ҫавна?— Унтан ятлама тытӑнать:—Кӑра ҫилӗллӗ эс, хӗрарӑма килӗшмест вӑл. Тимуша юратан канишнӑ. Тата мӗнле пултӑр-ха — хӑвӑн ачу-ҫке. Анчах канӑҫ та кӑтартмастӑн. Капла эс е хуҫса пӑрахан ӑна, е пурпӗрех вӑл хӑй пек ҫитӗнет, сан пек мар. Эс ӑна хӑв пек пулманшӑн ҫилленен. Ҫын хӑйне майлӑ пурӑнма тӑрӑшни сана пӑлхав тунӑ пек туйӑнать пулмалла. Тӗнчере темле ӑслӑ ҫын та пур, ачисене пурте хӑйсем пек ӳстерсен, ниҫта пӗр ухмах юлмӗччӗ те, ухмахсем те нумай-ҫке. Каснӑ-лартнӑ пӗр пек этемсем те ҫук. Кашнин хӑйӗн ҫулӗ ҫав...

Пӑтранать-пӑтранать те вӑл канма чарӑнать, питне аллипе шӑлса илет. Вӑл ҫав тери кирлӗ япала каласшӑн пулас, шухӑшне хӑй чиперех ӑнкартать пулмалла—ҫавӑрса калаймасть.

— Йӑлтах хам ҫинче,— тесе хуллен, асӑрханса хутшӑнать калаҫӑва аппӑшӗ. Халӗ вӑл кирек мӗн каласа вӑрҫсан та килӗшет. Хӑйне вӑрҫнине вӑл айӑпшӑн тӳлени шутне кӗтӗрччӗ, тет. Шӑллӗ ҫур сӑмах калас пулсан та, чаранса итлеме хатӗр.—Йӑлтах хам ҫинче... Ҫи-пуҫӗ, ӗҫме ҫими, вӗрентесси. Ҫӗрле вӑрансан пыра-пыра итлеп. Ыйӑх тӗлӗшпе ахлатать, тен, чирлӗ вӑл, тетӗп. Урокне темле вӗренчӗ-ҫке тата? Сивӗ мар-ши ӑна? Ҫӗр тӗрлӗ шухӑш. Пӗрмай ҫапла. Кунӗн-ҫӗрӗн.

— Ыран Элекҫей патне кайса килетӗп,— тесе лӑплантарма пӑхать ӑна шӑллӗ.— Ҫитет сире ухмахланма.

Аппӑшӗ сасартӑк улшӑнса каять те тӑрса пӗр ҫӑвар шыв сыпать.

— Ун ҫинчен ан асӑн, шӑллӑм. Илтетни? Нихҫан та! Каснӑ чӗлӗ вӑл. Тимушпа иксӗмӗрех пурнатпӑр.

Шӑллӗ ун ҫине вӗлт пӑхса илет те калас сӑмахне каламасть...

